# Сувар

*Чăваш пулар, пĕрле утар!*

7№ (477)
эрнекун
нарăс уйăхĕн (февралĕн) 14-мĕшĕ,
2003 çул

Республиканская общественно-политическая чувашская газета
Тутарстан Республикинчи чăвашсен обществăпа политика хаçачĕ


## «СУВАРА» ÇЫРĂНАР!

«Татарстан почтасы» почта çыхăнăвĕн управленийĕ вулакансене парне турĕ — 2003 çулхи I çур çуллăх хакĕпе (65 тенкĕ те 40 пус) çулталăклăхах хаçат-журнал çырăнма май пур. Çăмăл майпа çырăнассин срокĕ кĕске: февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 31-мĕшĕччен кăна.

«Сувар» редакцийĕ хăйĕн яланхи тусĕсемпе çĕнĕ вулаканĕсене васкасах почта уйрăмне çитме сĕнет — 2003 çулăн II çур çулне çырăнтару хакĕсем ӳсес хăрушлăх пур.

АСТĂВĂМ

**Ноябрĕн 10-мĕшĕнче Пăва районĕн милиционерĕсем виçĕ вырăна чечек çыххисем хураççĕ: райцентрта, Чĕмпĕр енчен пырса кĕнĕ çĕрте; Лащи станци патĕнче; «Восход» хуçалăх çĕрĕн чиккинчи аслă çул çинче вырнаçнă автозаправка çумне. Хĕрлĕ мрамор плитасем çине 2002 çулхи нарăсăн 4-мĕшĕнче хĕç-пăшаллă преступниксене чарса пуçĕсене хунă юлташĕсен ячĕсене çырса хунă, çавсене асăнаççĕ тăнăçлăха сыхлакансем. Вăл кун пилĕк милиционерăннипе пĕрле хĕсметре тăман икĕ çын пурнăçĕсем вăхăтсăр таталнă, вĕсен мрамор палăкĕсем патĕнче те чĕрĕ чечексем. Пăвари тĕп тӳремре çав юнлă куна аса илтерекен монумент тăрать.**



# ЧĔРЕ СУРАНĔ ЧАС ТӲРЛЕНМЕСТ



Трагеди пулнăранпа çулталăк çитрĕ. Нарăсăн 3-мĕшĕнче Пăвара асăну митингĕ пулчĕ. Унта Пăва районĕн администраци аппарачĕ, Тутарстан Республикин ШĔМ представителĕсем, районти предприятисен ертӳçисем, шкул ачисем хутшăнчĕç. Пухура райадминистраци пуçлăхĕ А.К.Садретдинов хĕç-пăшаллă преступниксене чарма пăхса пуçĕсене хунă мирлĕ граждансене вилнĕ хыççăн Раççей Президенчĕн указĕпе «За отличие в охране общественного порядка» медальсемпе наградăларĕ. Вĕсене Олег Сайкинпа Сергей Шурбинăн арăмĕсем илчĕç. Хĕç-пăшаллă ирсĕрсене малалла кайма паман Радислав Шурбина та çав медалех пачĕ Аглям Киямович. Митинг хыççăн пысăк ушкăн автобуспа трагеди вырăнĕсене çитсе çаврăнчĕ.

Çул хĕррисенчи мрамор плитасене тимĕр карта тытнă, вĕсене тирпейлесе тăраççĕ. Нарăс çилĕ хӳсе тултарма ĕлкĕрнĕ юр çинче юн пек хĕрлĕ гвоздикăсем инçетрен курăнса выртаççĕ.

Администраци пуçлăхĕн социаллă ыйтусемпе ĕçлекен çумĕ А.К. Айзатуллов пирĕн корреспондента сарăмсăр çĕре кĕнисен çемйисене мĕнлерех пулăшу кӳни çинчен каласа пачĕ. Милиционерсен çемйисенчи хваттер ыйтăвне татса панă, укçан та пулăшу кӳреççĕ, йĕркене сыхласа вилнĕ паттăрсен ячĕсене Милицин асăну кĕнекине кĕртнĕ, урамсемпе шкулсене панă. Вилнисен ашшĕ-амăшĕсене те пулăшу кӳме йышăннă администрацире. О.Сайкинпа С.Шурбин çемйисене те пурте пулăшаççĕ. Милицисем те, администраци те, хуçалăх та. Вĕсене черетсĕр телефон кĕртсе панă, хуçалăх тырăпа тивĕçтерет. Çурт-йĕр юсамалла-и, ачисене вĕрентме кĕртмелле-и е ытти социаллă ыйтупа администраци пулăшма ялан хатĕр. «Сувар» хаçат редакцийĕ те тăлăха тăрса юлнă ачасене шкулта кирлĕ вĕренӳ хатĕрĕсем парнелерĕ. Йывăр самантра пĕчĕк тимлĕх уйăрни те пысăк пулăшу кӳнĕ пекех. Ыркăмăллăх акцине ыттисене те хутшăнма чĕнетпĕр.

— Пулăшкалаççĕ, манмаççĕ. Вечех çителĕклĕ пек, ачасен ашшĕсене кăна тавăраймăн. Тăратса лартса кăтартасчĕ хальхи пурнăçа вĕсене, — тесе куççульне шăлать Олег арăмĕ Надежда Сайкина. — Макăрса ывăнтăмăр ĕнтĕ, малалла пурăнмалла вĕт. Ачасене тĕрĕс-тĕкел ӳстерсе çитĕнтересчĕ, лайăх çын тăвасчĕ. Йывăр та ĕнтĕ, мĕн тăвăн. Инкек алăк шаккаса кĕмест теççĕ.

Кĕмĕл тĕслĕ медаль сервантра кĕленче алăк хыçĕнче вырăн йышăннă. Ун çине Сайкинсен çемйинчи чи кĕçĕнни, 4 çулхи Радик, пӳрнипе тĕллесе мăнаçлăн: «Аттен вăл,» — тет. Надежда Сайкинăпа Ирина Шурбина та ачисене вĕрентнĕ, воспитани панă чух мăшăрĕсене тĕслĕхе хураççĕ: «Йывăрлăхсенчен ан хăра», «Тăрăшса ĕçле», «Маттур пул — аçу пек...»

Радислав Шурбина çур çул каялла халăх Рункă ял канашĕн председательне суйласа лартнă. Иртни çинчен аса илтерсе чĕрине ыраттарас килмерĕ, хăй те ун çинчен шухăшласа ывăннă-тăр. Куç умĕнче туссене персе вĕлерни чĕререн час тухмасть, «ăшаланă» фактсем шыракан журналистсен те кун çинчен пăртак шутласчĕ.

— Мĕн кăна çырмарĕç хаçатсенче пирĕнпе пулса иртни çинчен. Тĕрĕслĕхрен чылай аякри информаци эрлентерет,— терĕ кĕскен ял канашĕн председателĕ. Хăй вăл ялта часовня хăпартас шухăшпа çӳрет иккен. Ырламалли пуçару. Халăх ытла хаярланса пырать, чиркӳ çынна лăплантармалла. Пурте Турă айĕнче çӳретпĕр. Яла кĕрекен çĕрте çул çине хитре хапха туса лартасшăн Радислав Геннадьевич. Ун çине ял ятне чăвашла та çырма шантарчĕ пуçлăх.

Ачасем парнешĕн питĕ хĕпĕртерĕç, ашшĕсем тăнăçлă пурнăçшăн пуçĕсене хунине ăнланаççĕ вĕсем. Анчах мĕнпе сиплемелле-ши пĕчĕк чĕре суранне?.. Димăпа Денис 2002 çулхи нарăсăн 4-мĕшĕнче хĕç-пăшаллă дезертирсене тытса чарнă чух пуçне хунă ашшĕне халлаласа сăвă та çырнă.

Ӳсĕр преступниксен тĕллевĕ — пĕр-пĕр ресторана алла илсе алхасассие Хусана кайса каматăр тавăрасси пулнă теççĕ. Тĕрĕсне халь калама йывăр, анчах иккĕшĕ те чаçрен бронежилет тăхăнса тарни вĕсем юн тăкма хатĕр пулнине тепĕр хут çеç çирĕплетет. Çак хăрушă пулăм çинчен Хусан патшалăх университетĕнчи журналистика факультечĕ кĕнеке те пичетлесе кăларнă. Проект ертӳçи С.Шайхитдинова.

Тата пĕр хыпар. Çулталăк иртсен пĕр дезертирăн А.Шагаевăн Юдинăра пурăнакан ашшĕ-амăшĕсем Пăва районĕнче пурăнакан тăлăх арăмсенчен ывăлĕшĕн каçару ыйтма килесшĕн пулнă. Анчах çӳлте ларакансенчен камтăр çакна пĕлсе вĕсене васкама сĕнмен. Вăхăт чи лайăх сиплевçĕ пулсан та, чĕре суранĕ час тӳрленмест.

**Константин МАЛЫШЕВ.**
**Автор сăнӳкерчĕкĕсенче: О.Сайкинпа С.Шурбин ачисем.**

### *АТТЕ ТАВРĂНМАРĔ*

Ак кайрĕ тухса ирпе-ирхине,
Капмар та мăнаçлă Чĕмпĕр хулине.
Илсе килме пулчĕ пире кучченеç,
Банан та, йогурт та... веçех.

Кун иртрĕ, сисмесĕр каç пулчĕ,
Çемье кĕтрĕ çывăх çынна.
Вуниккĕ те çапрĕ сехетĕн куранчĕ,
Çук, халь те килмерĕ атте.

Шак-шак! Шаккарĕç сасартăк,
Шарт сикрĕ, вăранчĕ çемье.
Хăрушă хыпар пĕçерчĕ кăвар пек,
Пит çăвăнчĕ вĕри куççульпе.

Выртать тупăкра чĕнмесĕр аттеçĕм,
Хӳхлет чарăнми юратнă аннем.
Виç ывăç тăпра сапайрĕ ял-йышăм,
Пуç тайрĕç ватти те вĕтти.

«СУВАР» — 10 ÇУЛ. КОНКУРС

## ЯТЛĂ ПАРНЕ

*Хаклă ентешсем! Тăванăмăрсем! Хаçата çыракансем! Кăçалхи августра «Сувар» тухма тытăннăранпа вунă çул çитет. Тутарстанри чăвашсемшĕн тăван чĕлхепе тухакан хаçат пурри — питĕ пысăк телей. Çавăнпа та вăл çутта тухнă куна эпир чыслă паллă тума тивĕçлĕ. Редакци пĕрремĕш юбилей ячĕпе конкурс ирттерме йышăнчĕ. Чи пултаруллă çыравçăсене парне пама шутлатпăр. Çавăнпа та тĕрлĕрен жанрпа çырнă материалсен конкурсне уçатпăр.*

**ЧИ ЛАЙĂХ ОЧЕРК.** Ăна çын е коллектив пурнăçĕ çинчен çырмалла. Очеркра, калаври пек, илемлĕ чĕлхе пултăрччĕ, çыраканăн кăмăлĕ уççăн курăнтăрччĕ, герой ыттисемшĕн çутă йĕр хăвартăр, вулакансен чĕрине тыткăна илтĕр, яланлăхах асра юлтăр.

**ЧИ ЛАЙĂХ РЕПОРТАЖ.** Ку жанр пĕр-пĕр коллективăн паянхи ĕçне çуттăн кăтартса пама, ĕç-хĕлĕн пысăк пĕлтерĕшне хаклама май парать.

**ЧИ ЛАЙĂХ КОРРЕСПОНДЕНЦИ.** Материалсенче пысăк проблемăсене çĕклемелле, ăна татса памалли меслетсене кăтартмалла.

**«СУВАРА» ХАЛАЛЛАСА ÇЫРНĂ ЧИ ЛАЙĂХ СĂВĂ.** Редакци ку енĕпе сĕнӳ тумасть. Сăвăççем хăйсен шухăш-кăмăлне кăтартма пултараççĕ.

**«СУВАРА» ПИЛЛЕНĔ ЧИ ЛАЙĂХ ЮРĂ.** Кунта сăввине те, юрă нотисене те ярса памалла. Сăвăçне те, композиторне те парне тивет.

*Редакци конкурса янă материалсене кĕтет. Рубрикине «Сувар» — 10 çул. Конкурс» тесе паллă тумалла.*

МĔНЛЕ ПУРĂНĂПĂР

## *ПЕРЕКЕТЛЕМЕ ХĂНĂХТАРАСШĂН*

Çурт-йĕр коммуналлă хуçалăхĕ реформа ирттерме тытăнчĕ. Çак ыйтупа республикăри хаçатсен тĕп редакторĕсем Тутарстан Республикин строительство, архитектура тата çурт-йĕр коммуналлă хуçалăхĕн министрĕпе М.Ш.Хуснуллинпа тĕл пулчĕç. Вăл çапла хыпарларĕ. Халлĕхе ку отраслĕн структури улшăнмасть-ха. Чи малтан бюджет пысăк тиеврен хăтăлать. Хваттер тӳлевĕнче дотаци текенни палăрмаллах чакать. Çавна май пирĕн пурнăç хакĕ ӳсет. Укçа сахал илекенсене кăна социаллă пулăшу параççĕ.

Апла кашни çыннăн чи малтан перекетлеме хăнăхмалла. Электролампăсем усăсăр ан çунччăр. Газа, шыва хаклама вĕренмелле. Чӳречесене, алăксене хĕллене тĕплĕн хатĕрлемелле, шăтăк-çурăксене питĕрмелле, çыпăçтармалла. Подъезд алăкĕсене те хупса, питĕрсе çӳремелле. Çапла пуçланать реформа.

**Хамăр корр.**

## *КИТАЙРА ТА ТУТАРСЕМ ПУР*

Иртнĕ эрнере Тутарстан Президенчĕ Минтимер Шаймиев Китайри тутарсен диаспорин представительне Ильяр Габитова Хусанти кремльте йышăннă.

Китай Халăх Республикинчи ентешсем Тутарстанпа çыхăну çирĕплетессишĕн тăрăшни тутарсен пĕрремĕш Конгресĕнчен пуçласа уççăн курăнать, палăртрĕ республика пуçлăхĕ. Китайăн Синьцзян-Уйгур автономлă районĕнче 6 пин тутар пурăнать. Вĕсенчен чылайăшне революци хыççăн унта куçма тивнĕ. Халăх тăван чĕлхене, культурăна упрама тăрăшнă. Халĕ çамрăксем Тутарстанра аслă пĕлӳ илме ĕмĕтленеççĕ, бизнес енĕпе ĕçлеме тăрăшаççĕ.

**«Татар-информ» пĕлтернĕ тăрăх.**